Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

51 (7691) № ✻ *Шăмат кун, 2009 çулхи июнĕн (çĕртме) 27-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Паян – Раççей çамрăкĕсен кунĕ**

## Ăсталăхпа палăрать



***Эсир сăн ӳкерчĕкре Хорнуйĕнчи ветеринари участокĕн ертӳçине Марина Витальевна Макарована куратăр. Чăваш Республикин ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухнă çамрăк ертӳçĕ тилхепине кăçал тытрĕ.***

***– Ял çыннисен выльăхĕсене таса та сывă усрасси çынсен сывлăхĕшĕн тăрăшни те пулать. Çавăнпа та ответлăха туйса ĕçлетпĕр, – терĕ кĕске сăмахра Марина.***

***Çамрăксем хăйсене шаннă ĕçре яваплăха туйсан ырă малашлăха шанма пулатех. Çапла пултăрччĕ те.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**

Çамрăксен кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

Малашлăх ĕçĕсемпе шанчăксен хавхалануллă вăхăчĕ, çĕнĕлĕхсен манăçа тухми тапхăрĕ асран тухми савăнăç парнелеççĕ. Çамрăк чухне пулас çитĕнӳсем патне çитмелли майсем, хăюллă кăмăл-туйăм çуралаççĕ.

Халăхра çапла калаççĕ: «Ĕмĕтĕн вĕçĕ-хĕрри çук». Çавна палăртма кăмăллă. Чăваш Енри çамрăксем ĕмĕтленме кăна мар, хăйсен ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртме те пĕлеççĕ. Çуллен республикăра пурăнакан пиншер çамрăк президент стипендийĕсене тата çамрăксен премийĕсене, ытти наградăсене тивĕçет, пысăк пĕлтерĕшлĕ конкурссемпе олимпиадăсен çĕнтерӳçи пулса тăрать. Патшалăх тивĕçĕ – лайăххи, прогрессивли тата хальхи вăхăтри патне ăнтăлакан çамрăксене пулăшасси. Пурнăçри социаллă проблемăсене татса парасси, çамрăксем хăйсен пултарулăхне пур енчен кăтартма пултаракан организацисемпе пĕрлешӳсем туса хурасси – пирĕн республикăн политикин тĕп енĕсенчен пĕри.

Республикăна Раççей тата пĕтĕм тĕнче шайĕнче тивĕçлипе кăтартнишĕн, тăван ен аталанăвĕшĕн ырми-канми вăй хунишĕн сире пысăк тав сăмахĕ калатăп. Сирĕн энергирен, çине тăнинчен тата пуçарулăхран пирĕн республика пуласлăхĕ те килет. Сире мал туртăмлă ĕçĕрте çĕнĕ çитĕнӳсем, ырлăх-сывлăх, ăнăçу, юрату тата телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛĔ ÇАМРĂКСЕМ!**

Сире Раççей çамрăкĕсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çамрăклăх – кашни çыннăн пурнăçĕнчи чи илемлĕ вăхăт. Çутă шанчăкпа çунатланса, ĕмĕт-тĕллевсене, çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртес, пысăк кăтартусем тăвас килекен вăхăт. Пĕтĕм пуласлăхăмăр – çамрăксенче. Пирĕн çĕршывра çамрăксен политикин ыйтăвĕсене мала хураççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ Раççей Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн 2009 çула пирĕн çĕршывра Çамрăксен çулталăкĕ тенĕ.

Район малашлăхĕ мĕнле пуласси те сирĕн хастарлăхăрпа пултарулăхăртан нумай килет. Çавăнпах ĕнтĕ тĕп тĕллевĕмĕрсенчен пĕри шăпах сирĕнпе çыхăннă: çамрăксене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма, пултарулăхне аталантарма, ĕçпе тивĕçтерме тăрăшмалла. Сывă пурнăç йĕрки, культурăпа тавракурăма ӳстересси, спорта юратни те çамрăксен кулленхи пурнăç йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăмалла. Вĕренӳре маттур, ĕçре хастар çамрăксем пирĕн шанчăк пулса тăраççĕ.

Малашне те эсир ырă пурнăç тăвассишĕн çунса тăрасса, пуçаруллă пуласса, аслисен йăли-йĕркине тытса пырасса, малалла аталантарасса шанатăп. Паянхи кăмăл-туйăм, хастарлăх сирĕнте пĕрре те ан иксĕлччĕр. Çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума сире çирĕп сывлăх, юрату, телей сунатăп. Ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр, шухăшлани пурнăça кĕтĕр. Умăрти çулăр уçăлсах пытăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне «Симĕс ĕç çи» епле пынине кăтартни**

**1. Нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕ. 2. Çулнă (гектарпа). 3. Утă хатĕрлемелли план. 4. Утă хатĕрленĕ (тоннăпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 626 | 50 | 523 | – |
| «Волга» | 208 | 30 | – | – |
| «Восток» | 182 | 90 | 404 | 80 |
| «Герой» | 170 | 39 | 667 | – |
| К. Иванов яч. хис. | 325 | 0 | 0 | 0 |
| «Агро-Урожай» | 105 | 0 | 0 | 0 |
| Ильич яч. хис. | 430 | 90 | 1147 | 20 |
| ВТМ | 50 | 3 | – | – |
| Ленин яч. хис. | 582 | 5 | 276 | – |
| «Лидер» АФ | 396 | 0 | 0 | 0 |
| «Оринино» | 594 | 208 | 750 | 51 |
| «Передовик» | 874 | 70 | 274 | 180 |
| «Свобода» | 379 | 100 | 1236 | 20 |
| «Сеятель» | 438 | 18 | 82 | – |
| Суворов яч. хис. | 636 | 300 | 822 | 150 |
| «Рассвет» АФ | 492 | – | 58 | – |
| «Ударник» | 1570 | 300 | 2035 | 180 |
| Чапаев яч. хис. | 300 | 60 | 399 | 10 |
| Чкалов яч. хис. | 132 | 80 | 269 | 17 |
| Мичурин яч. хис. | 60 | – | – | – |
| «Хлебороб» | 150 | 15 | 107 | – |
| «Колос» АПФ | 43 | 15 | – | – |
| **Районĕпе** | **10097** | **1668** | **9049** | **738** |

**Йыхрав**

## Пособи тата пенси ыйтăвĕсемпе

Июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа районти социаллă хӳтлĕх пайĕн, социаллă пулăшу паракан центрăн тата пенси фончĕн районти уйрăмĕн ĕçченĕсем вырăнсене тухса ял çыннисемпе тĕл пулма палăртаççĕ. Вĕсем ача амăшĕсене тӳлекен пособисемпе субсидисем, ватăсемпе инвалидсене паракан пулăшусем тата пенсипе тивĕçтерессипе çинчен тĕплĕн каласа парĕç. Ял çыннисен ыйтăвĕсене туллин хуравлĕç.

Пĕрремĕш тĕл пулусем июлĕн 1-мĕшĕнче Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче (Ваçкассинчи Культура çуртĕнче, 10 сехетре), Чуманкасси ял тăрăхĕнче (Чуманкассинчи клубра, 14 сехетре) пулаççĕ.

**Халăх тата влаç – тĕллевсем те пĕр пек, ĕççем те пĕрле**

## Район администрацийĕ сирĕнтен сĕнӳсем кĕтет

Район администрацийĕн тĕп тивĕçĕ – йĕркеллĕ ĕçлекен вырăнти хăй тытăмлăх органне йĕркелесси. Çакă районта пурăнакан халăхăн пурнăç шайне ӳстерме пулăштăр, ертсе пырас ĕçре объективлă информацисене тĕпе хурса тунă йышăнусен эффективлăхне ӳстертĕр.

Нумаях пулмасть район администрацийĕ пахалăх сертификатне тивĕçрĕ. Çакă район администрацийĕ муниципаллă пулăшусене парассине тата администрацин муниципаллă функцийĕсене пахалăх менеджменчĕн системине тивĕçтермелле туса пынине çирĕплетсе парать. Асăннă сертификат ГОСТ Р ИСО 9001-2001 (ИСО 9001:2000) требованийĕсене тивĕçтерет. Вăл 2012 çулхи майăн 26-мĕшĕччен вăйра тăрать.

Каласа хăвармалла, район администрацийĕ ИСО 9001:2000 требованийĕсемпе килĕшӳллĕн тивĕçсене пахалăхлă пурнăçлас тĕлĕшпе ятарлă Политика йышăнчĕ тата унăн тĕллевĕсене палăртрĕ. Çак документсемпе килĕшӳллĕн район администрацийĕ потребительсенчен (районта пурăнакансенчен) вĕсен шухăшне анонимлă майпа ыйтма шутларĕ: район администрацийĕ паракан муниципаллă пулăшусем, вĕсен пахалăхĕ тивĕçтереççĕ-и сире? Тата мĕн тумалла унăн хăйĕн ĕçĕсене лайăхлатас тесен?

Хăйсен шухăшне уйрăм çынсем те, юридически лицосем те калама пултараççĕ. Район администрацийĕ сирĕнтен, хисеплĕ ентешсем, сĕнӳсем кĕтет. Хăвăр шухăшăрсĕнĕвĕрсене эсир район администрацийĕн пĕрремĕш хутĕнче вырнаçтарнă ятарлă ещĕке яма е 62-2-36, 62-3-64 телефонсемпе шăнкăравласа калама пултаратăр.

**Сыв пуллашу балĕсем иртрĕç**

## «Тавах, тăван шкулăмăр. Сыв пул...»

Хĕвеллĕ те илемлĕ пулчĕ иртнĕ ытлари кун – июнĕн 23-мĕшĕ. Анчах районти 317 çамрăкшăн вăл кăштах тунсăхлă та пăлхануллă. Шăпах çавăн чухлĕ яшпа хĕр тăван шкулпа сыв пуллашрĕ ĕнтĕ ун чух. Шкулсенче сыв пуллашу балĕсем иртрĕç.

– Телей пултăрччĕ сирĕн çак пысăк тĕнчере хăвăрăн вырăнăра тупма, – Муркашри лицей директорĕн Е.Н. Смирновăн çак сăмахĕсем пур выпускниксене те çитчĕр.

Лицейран вĕренсе тухакан 44 çамрăк хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе çак кун район администрацийĕн ларусен залне пуçтарăнчĕ. Район пуçлăхĕн ячĕпе вĕсене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов саламларĕ:

– Çирĕп сывлăхлă, çивĕч те хăюллă тата тăрăшуллă пулăр. Вара хăвăр ума лартнă тĕллев патне çитетĕрех, – терĕ вăл.

Владислав Григорьевич вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçипе З.Ю. Дипломатовапа пĕрле 4-мĕш чĕрĕк пĕтĕмлетĕвĕсемпе отличниксене район пуçлăхĕн стипендине, чи-чи маттуррисене медальсем парса чыс турĕç.

Зоя Юрьевна палăртнă тăрăх, кăçал районĕпе 13-ĕн ылтăн медале тивĕçрĕç. Лицейран вĕренсе тухакан О. Лебедевапа А. Иванова шăпах вĕсен йышĕнче. Т.Евтихеева, Л.Краснова, Н. Петрова вара кĕмĕл медаль илчĕç.



Вĕсен йышшисем районĕпе пурĕ 8-ăн.

Муркаш лицейĕ кадетсен класĕпе те палăрса тăрать. Çак кун алла аттестат илекенсенчен 17-шĕ шăпах кадетсем пулчĕç. РФ федераллă службăн Чăваш Республикинчи наркотиксене сутассине контроллекен управленин ертӳçин çумĕ С.В. Чехов палăртнă тăрăх, Муркашри кадетсем 2-мĕш çул ĕнтĕ кубока хăйсенчех хăварчĕç. Вăл ачасен полицийĕн академийĕн попечительсен канашĕн директорĕпе О.К. Степановпа пултаруллă кадетсене асăнмалăх парнесем пачĕ. Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕн В.В. Буклаковăн салам сăмахĕсем те шкултан вĕренсе тухакан кадетсемшĕн асра юлĕç. Сыв пуллашу каçĕ лицейра вĕренекенсемшĕн ку таранччен мĕн тунине пĕтĕмлетнин уявĕ те пулчĕ. Тĕрлĕ предметсемпе тунă çитĕнӳсемшĕн те тивĕçрĕç вĕсем Хисеп хучĕсене.

Ашшĕ-амăшĕсем те (вĕсен ячĕпе Л.Н. Зубкова тухса калаçрĕ) калас сăмаха каларĕç ĕнтĕ, вĕрентекенсене тав турĕç: вĕрентнĕшĕн, юратнăшăн, пурнăç çулĕ тĕлне кăтартнăшăн. Вăрăм та тикĕс пултăр вăл вĕсен. Ĕнерхи шкул ачисен чунĕнче сыв пуллашу каçĕнче янăранă вальсăн çепĕç çемми пурнăç мĕн тери илемлĕ иккенне систерсех, умри йывăрлăхсене çĕнтерме вăй-хал парсах тăтăр.

**Л. ТУКТИНА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: сыв пуллашу каçĕнчи самант.**

**Саламлатпăр**



Хисеплĕ та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, пиччене, шăллăма – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Николай Димитриевич ГОЛУБЕВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, мĕн пур ыррине тата вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, çирĕп сывлăх сунатпăр. Эс пурришĕн савăнатпăр, санпа хамăра телейлĕ туятпăр. Санпа юнашар яланах хăвăн пек ырă кăмăллă та тӳрĕ чунлă тăванусемпе тусусем пулччăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ашшĕпе амăшĕ, юратнă хĕрĕсем, тăванĕсем, юлташĕсем.**



Çатракасси ял тăрăхĕнчи Ятманта пурăнакан юратнă мăшăра, пиччене, аттене, хисеплĕ хуньстарике, ырă кăмăллă асаттепе кукаçие, ватă кукаçие тата яланах пире тараватхăтана – **Вячеслав Петрович ПЕТРОВА** 80 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан сăмахсемпе ăшшăн саламлатпăр! Санăн пурнăçу – пирĕншĕн ырă тĕслĕх. Эсĕ ĕçе вĕрентни тата хăв тăрăшса вăй хуни – пирĕн паянхи кун-çул. Тавах сана пуриншĕн те. Ырă кăмăлпа, тулли те çирĕп сывлăхпа, пуян кĕрекепе тата йышлă тăванусемпе санăн татах нумай çул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр. 100 çулччен пирĕнпе юнашар пурăнма сĕнетпĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, йăмăкĕ, хĕрĕсемпе ывăлĕсем, кĕрĕвĕсемпе кинĕсем, 13 мăнукĕ, 6 прамăнукĕ, хăтисемпе тăхлачисем.**

**Иккĕмĕш çур çул валли çырăнтараççĕ**

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата иккĕмĕш çур çулта илсе тăма унчченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Васкăр! Райхаçата çырăнмалли тапхăр тунти кун вĕçленет.**

**Райхаçат редакцийĕ.**